ХЫПАР

Чăваш ачисен хаçачĕ

# Тантăш

6+

15 (4481) №, 2016, апрель (ака), 21
1931 çулхи январĕн (кăрлачăн) 12-мĕшĕнче тухма тытăннă

Хакĕ ирĕклĕ
Индексĕ: 54802

**Çырăнтару–2016**

**2016 çулăн II çурринче илсе тăмашкăн *ака уйăхĕн 1-мĕшĕнчен***

**"ХЫПАРА" — 736,02 тенкĕпе, "ХЫПАР–эрнекуна" — 338,34 тенкĕпе, "ТАНТĂША" — 261,84 тенкĕпе, "ТЕТТЕ" журнала — 145,20 тенкĕпе, "САМАНТ" журнала 182,94 тенкĕпе кашни çыхăну уйрăмĕнчех çырăнтараççĕ**



ПУКАНЕ ТЕАТРĔ

# Пире те парăр-ха роль...



**Тĕрлĕ пусмаран тетте çĕлекен Вера Федоровна Кузнецова патне Богдан чупса пычĕ. Кушак çури пек йăпшăнчĕ унăн çумне улттăри мăнукĕ.**

– Асанне, асанне, хама канăç паманни пирки пĕлтерем-ха. Ир те, каç та шухăшлаттарать вăл. Кала-ха, тархасшăн, мĕншĕн юратнă Хĕвел сăнарне ытти ача та калăплать? Эсĕ ăна мана шанса панă-çке. Апла пулсан хĕвел пирки манран ытла пĕлекен те çук. Хĕвел – ир-ирех вăранать, чĕрчунсемпе çынсене ырăлăх парнелет. Ăна пахчара ӳсекен çимĕçсем те юратаççĕ. Эпĕ те вăл сарă хĕвелĕн ăшшипе киленме тăрăшатăп, – пăшăрханчĕ арçын ача.

Вера Федоровна ĕçне пăрахсах мăнукне ыталаса илчĕ, юратса çурăмĕнчен, пуçĕнчен ăшшăн ачашларĕ.

– Эсĕ пĕр пьесăра Хĕвел пулатăн, иккĕмĕшĕ – тепринче. Ара, хĕвеле сан пекех юратакансем пур. Çавăнпа вĕсем те сцена çинче «хĕвел» пулса курасшăн, халăха самантлăха хавхалану парнелесшĕн, – ăнлантарчĕ асли кĕçĕннине.

– Чăнах, асанне. Кун пирки шухăшламан эпĕ. Хĕвелне ăна пурте юратаççĕ çав. Ун пирки сăввине те нумай пĕлетĕп. Акă итлесем пĕрне, эсĕ вĕрентнине!

Хĕвел, хĕвел, хĕвел, тух,
Хĕветĕре курма тух!
Хĕветĕре пулмасан
Хĕвеклене курма тух! – пӳрт тулли хавассăн янăраттарчĕ сăввине арçын ача.

...Патăрьел районĕнчи Сăкăтра пурăнакан Вера Федоровна Кузнецова темиçе çул каяллах ача-пăча пукане театрĕ йĕркеленĕ. Паян та ун патне 1-6-мĕш классем кăмăлтан çӳреççĕ. Хăйсемех теттесем çĕлеççĕ, тĕрлĕ спектакльпе таçта та çитеççĕ. Районта, республикăра пĕрре мар палăрнă хас-тарсене ял-йыш кăмăллать.

Сăкăт садикĕнче хăйсен пултарулăхĕпе паллаштарнă хыççăн Вера Федоровнăна пĕчĕккисем канăç памаççĕ. Богдан Кузнецова кура ăна пурте юратса асанне тесе чĕнеççĕ çитменнине!

– Асанне, асанне! Эсĕ пире хăçан роль валеççе паратăн? Пирĕн те питĕ артист пулас килет вĕт-ха, – йăлăнаççĕ пĕр-пĕрне пӳле-пӳле.

– Ан пăшăрханăр, пĕрремĕш класа çӳреме тытăнсанах сире те хамăр йыша илĕпĕр, – йăл кулса та ăшшăн сăмахлать пĕчĕкскерсемпе Вера Федоровна.

Çапла, Вера Федоровнăна мĕн çамрăкранах ача-пăча юратнă, хисепленĕ. Паян та унра ăшăлăх тапса тăнине пурте туяççĕ авă.

*Элиза ВАЛАНС.*

Тĕрлĕрен: вула та пĕл

# Шăнкăрчсене – пирĕн парне



– Атте, кур-ха, эпир тунă вĕллене шăнкăрч çемйи йышăннă вĕт! Мĕн тери хитре юрлаççĕ вĕсем! – савăнăçне ниçта вырнаçтараймасть арçын ача ашшĕпе пĕрле утнă май.

– Çапла, ывăлăм, вĕсем пирĕнтен пулăшу кĕтеççĕ çав: хĕлле те, çуркунне те. Шартлама сивĕ кунсенче çунатлă туссене валли апатланма сырăшсем тунине астăватăн пуль? Халь вĕллесем ăсталарăмăр та, вĕсене шăнкăрчсем йышăннă та. Хăвах куратăн.

– Апла эпир нумай ырă ĕç тунă… – çаплипех шăкăлтатса калаçрĕ арçын ача.

Шăнкăр-шăнкăр шывпа, хаваслă сасăпа килсе çитрĕ çуркунне. Унпа пĕрлех пирĕн ене тĕрлĕ кайăк таврăнчĕ: тăри те тӳпере юрлать, шăнкăрч таврана илемлĕ юррине янраттарать, кĕçех шăпчăк та сад пахчинче пĕр чарăнми юрлĕ. Йăва çавăрса чĕпĕсем кăларĕç.

Эпир, Муркашри «Елочка» ача сачĕн «Смешарики» ушкăнне çӳрекенсем, çунатлă туссене кĕтсе илме çуркуннечен чылай малтан хатĕрлентĕмĕр. Кашни ача ашшĕ-амăшĕ пулăшнипе шăнкăрч вĕллисем ăсталарĕ. Аслисем çĕнĕ «çуртсене» йывăççем çине вырнаçтарма пулăшрĕç. Чăтăмсăррăн кĕтрĕмĕр пирĕн парнесене аякри тăрăхран вĕçсе килнисем хапăлласа йышăнасса. Кĕтни пĕрре те усăсăр пулмарĕ – халь кашни кун вĕллесене курса савăнатпăр, вĕсене кашнине йышăннă. Кĕçех унта чĕпĕсем те кăларĕç.

Пуринчен те ытла ачасем хĕпĕртерĕç. Вĕсен ырă ĕçĕ питех те пархатарлă.

***Алина АЛЕШКИНА,***
***ача сачĕн воспитателĕ.***

Муркаш районĕ,
Муркаш.

**САНӲКЕРЧĔКРЕ**: халь эпир ăсталанă вĕллесенче шăнкăрчсем пурăнаççĕ те ĕнтĕ.

# Патшалăх Канашĕнчи тĕлпулу



Нумай пулмасть Шупашкарти 4-мĕш гимназире 6-мĕш «л» класра вĕренекенсем /ертӳçи – З.А. Пайзерова/ Чăваш Ен Патшалăх Канашĕнче пулса курчĕç.

Тĕлпулу тĕллевĕ – ачасене патшалăх влаçĕнчи органсен ĕçĕ-хĕлĕпе, республикăри саккунсене йышăнас процедурăпа тата Раççей патшалăхĕн тытăмĕпе паллаштарасси.

Асăннă гимназирен вĕренсе тухакансенчен чылайăшĕ малалла аслă пĕлӳ паракан шкулсене, уйрăмах МГИМОна çул тытни никамшăн та вăрттăнлăх мар-тăр. Алла диплом илнĕ хыççăн вĕсем тĕрлĕ çĕршыври консульство учрежденийĕсемпе посольствăсенче вăй хураççĕ.

Хĕрачасемпе арçын ачасем парламентаризм музейĕнче те пулчĕç. Республикăри Патшалăх Канашĕн Аппарачĕн тата саккунсене йышăнмалли органти депутатсен ĕçĕ-хĕлĕ çинчен кăсăклансах итлерĕç. Патшалăх Канашĕн Аппарачĕн ертӳçи А.И. Ухтияров ачасен пур ыйтăвне те тĕплĕн хуравларĕ.

М.А. Титова госслужащи хăйĕн çинчен кĕскен каласа панă хыççăн çамрăксене вĕренӳре çитĕнӳсем тума, тăрăшма сунчĕ. «Шăпах çакă – малашнехи ăнăçлă пурнăç никĕсне хываканни», – терĕ вăл.

Улттăмĕш «л» класс ертӳçи Зоя Александровна патшалăх ĕçченĕсене интереслĕ тĕлпулушăн тав сăмахĕ каларĕ.

***Илья КЛОЧКОВ.***
**АВТОР сăнӳкерчĕкĕ.**



# Видеоблогер – лайăх професси

Тăван чĕлхе шăпи, чăваш халăхĕн пуласлăхĕ, паллах, пурне те шухăшлаттарать. Çакăншăн кашни çыннăн ĕмĕтленмелле çеç мар, тăрăшмалла та. Манăн вара çитĕнсе çитсен видеоблогер пулас килет. Çак профессипе ĕçлекенсем видеокамерăпа мĕн те пулин ӳкерсе илеççĕ те Интернета кăларса лартаççĕ. Унта вара тĕрлĕ наци çыннисем видеоблогера кураççĕ те унăн ĕçне хак параççĕ. Çак профессипе ĕçлекен çынсем питĕ пултарулă. Вĕсем юрра-таша та ăста. Акăлчанла калаçма тата çырма пĕлмелле, мĕншĕн тесен вĕсем тĕрлĕ çĕршыва çитсе кураççĕ, паллă ĕçтешĕсемпе паллашаççĕ.

Видеоблогерăн питĕ ăслă та дисциплинăллă, тăрăшуллă пулмалла, ырă енĕсене аталантармалла çеç мар, ĕçчен те сăпайлă, чăтăмлă, тăрăшуллă, тараватлă, ăшă кăмăллă пулмалла. Ара, унăн видео ӳкермелле кăна мар, кайран ăна йĕркелесе Интернета яма пĕлмелле.

Эпĕ хамăн çуралнă яла, района, Чăваш Республикине питĕ юрататăп. Шăпах çак тĕллеве пурнăçласчĕ. Пирĕн тăрăхра ку енĕпе ĕçлекенсем хальлĕхе çукрах. Эпĕ çак ĕçпе аппаланма тытăнсан хамăр енчи паллă çынсен пурнăçне, ĕç-хĕлне çутатса парăттăм. Пурте пирĕн Чăваш Ене пăхчăр, тĕлĕнччĕр, ăмсанччăр!

***Даша ВОЛКОВА,***
***5-мĕш класс.***

Хĕрлĕ Чутай районĕ,
Мăн Этмен шкулĕ.

Тантăш
чăваш ачисен хаçачĕ

● УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви; Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин «Хыпар» Издательство çурчĕ» Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ.

● ХАÇАТ ИНДЕКСĔ:
54802 - (çур çула) – Чăваш Республикинче

● Редакципе издатель адресĕ:
428019, Чăваш Республики,
Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13.

● "Хыпар" Издательство çурчĕ" АУ техника центрĕнче калăпланă. "Чувашия" ИПК" АО типографийĕнче пичетленĕ.
428019, Чăваш Республики,
Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13.

● "ЧУВАШИЯ" ИПК" ДИРЕКТОРĔ:
Тел.: 64-24-01

● ДИРЕКТОР - ТĔП РЕДАКТОР
М.М.АРЛАНОВ

● ТЕЛЕФОНСЕМ
директор-тĕп редактор: 56-00-67
редактор, çырусемпе
тата юнкорсемпе ĕçлекен пай: 28-83-86
шкул ачисен пайĕ: 28-85-69
спорт тата экологи пайĕ: 56-11-80
право, кăмăл-сипет пайĕ: 28-83-89
факс: (8352) 28-83-70
бухгалтери: 28-83-64

● РЕДАКТОР
В.ФЕДОРОВ

● НОМЕР ВУЛАВÇИ
Л.ВАСИЛЬЕВА

● КАЛĂПЛАВÇĂ
Н.ПЕТРОВА

● ЭЛЕКТРОН АДРЕС:
e-mail: tantas@list.ru

● ТИРАЖ
1265 экз.

● ЗАКАЗ
№ 1329
Пичете ака уйăхĕн 20-мĕшĕнче ала пуснă.

● ПИРĔН САЙТ:
www.hypar.ru

Газета «Тантăш» («Ровесник») зарегистрирована Управлением Федеральной службы по надзору в сфере связи, информационных технологий и массовых коммуникаций (Роскомнадзор) – свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ТУ21-00306 от 10.12.13 г.

Ⓡ паллăпа реклама материалĕсене палăртнă

Пичете графикпа 15 сехетре ала пусмалла, 14 сехет те 00 минутра ала пуснă.

# «Манăн тăван çĕршывăн геральдики» конкурс



**Ака уйăхĕн 15-мĕшĕнчен пуçласа çĕртме уйăхĕн 15-мĕшĕччен Республикăри ачасемпе çамрăксен библиотеки «Манăн тăван çĕршывăн геральдики» квест ирттерет. Ăна Чăваш халăх ÿнерçи, ЧР Патшалăх гербĕн тата Патшалăх ялавĕн авторĕ Элли Михайлович Юрьев çуралнăранпа 80 çул çитнине халалланă.**

Çак конкурс ачасемпе çамрăксене Чăваш халăх художникĕн Э.М.Юрьевăн пурнăç çулĕпе тата нумай енлĕ пултарулăхĕпе кăсăкланма, харпăр хăй тĕллĕн аталанма, Элли Юрьевăн пурнăçĕпе пултарулăхĕ пирки пĕлÿ шырама, унăн ятне тата ĕçĕсене ĕмĕрлĕхе упраса хăварма тивĕç.

Квеста республикăри пĕтĕмĕшле пĕлÿ паракан вăтам шкулсенчи, лицейсенчи, гимназисенчи 5-11-мĕш класс ачисем тата вĕсен ертÿçисем хутшăнма пултараççĕ. Çакна валли электрон почтăпа усă курса **kray1@chuvrdub.ru** адреспа палăртнă формăпа заявка ямалла. Вара сире квест ыйтăвĕсене ярса парĕç. Заявка бланкне ЧР ачасемпе çамрăксен библиотекин сайтĕнче вырнаçтарнă.

**Конкурс ĕçĕсене кăçалхи ака уйăхĕн 15-мĕшĕнчен пуçласа çĕртме уйăхĕн 15-мĕшĕччен çак адреспа йышăнаççĕ тата регистрацилеççĕ:** 428027, г. Чебоксары, пр. И.Яковлева, д. 8а, Чувашская республиканская детско-юношеская библиотека, отдел краеведческой и национальной литературы. «Республиканский дистанционный квест «Геральдика моей малой родины» тесе палăртмалла. Хăвăр ĕçсене **kray1@ chuvrdub.ru** электрон адреспа та çитерме юрать.

Конкурс пĕтĕмлетĕвĕсемпе **2016 çулхи çĕртме уйăхĕн 21-мĕшĕнче** библиотекăн официаллă сайтĕнче паллашма пулĕ.

Квеста хутшăнакансем пурте дипломлă /электрон почтăпа çитĕ/ пулĕç.

Конкурса хутшăнакансен ертÿçисене ЧР ачасемпе çамрăксен библиотекин Тав çырăвĕпе /электрон почта урлă/ чыслĕç.

Ыйтса пĕлмелли телефонсем: **/8352/ 52-37-22, 54-02-82.**

***Татьяна ЗАХАРОВА,***
***таврапĕлÿпе наци литератури пайĕн тĕп библиографĕ.***

# Этем тĕнчене мĕншĕн килет?



Аслă класра вĕренекенсем çывхарса килекен экзаменсем пирки унчченех шухăшлама тытăннă ĕнтĕ. Шкултан вĕренсе тухакан кашни ачана шиклентерет вăл. Вунпĕрмĕш класри Ирина Ивановăн шухăшĕсем те экзамен пирки çеç. Тем тĕрлĕ ыйтăва та пăхса тухмалла, нумай вуламалла. Пĕрремĕш класранах вĕренÿре лайăх кăтартусемпе палăракан пике кашни ыйтупа тĕплĕн хатĕрленме тăрăшать.

Халĕ пушă вăхăт та сахалтарах-ха. Çапах та чун киленĕçĕ валли ăна кăштах та пулин уйăрма май тупать Ирина. Вăл тĕрлĕ ăслăлăх статйине вулама кăмăллать. Çут çанталăк çинчен çырнисем те, ытарлă халапсем те килĕшеççĕ ăна. Вĕсем ăс-тăна çивĕчлетме, тавра курăма анлăлатма пулăшаççĕ. Ирина статьясенче яланах хăйне валли çĕннине тупать, кирлĕ пĕтĕмлетÿ тăвать.

– Нумай пулмасть пĕр халаппа паллашрăм. Вĕсем пурте хăйне евĕрлĕ, тарăн шухăш тĕшшиллĕ, философи тĕлĕшĕнчен те кăмăла каяççĕ. Асăннă хайлавра этем çĕр çине мĕншĕн килнине ытарлăн çырса кăтартнă. Пирĕншĕн чи пĕлтерĕшли – пĕр-пĕр ĕçре хамăра тупасси. Вăхăта выляса-кулса çеç ирттерме юрамасть, ĕçлесе çемьене тăрантарасси этемĕн малтанхи тивĕçĕ, – пайларĕ вăл шухăшне.

Экзаменсене ăнăçлă тытсан пултаруллăскер малалла математика енĕпе вĕренме каясшăн. Алла диплом илнĕ хыççăн вара математика учителĕнче тăрăшма ĕмĕтленет.

«Тантăш» вулаканĕсене те Ирина палăртнă тĕллевĕсене пурнăçа кĕртме чĕререн ырă сунать.

# Парашютпа сикме ĕмĕтленекен Диана



Ку шкулта спортпа туслă ача чылай. Вĕсенчен пĕри – саккăрмĕш класри Диана Табакова. Яваплăскере шкулти хĕрсен волейбол ушкăнĕн капитанĕ пулма шаннă. Ку тивĕçе вăл ăнăçлăн пурнăçласа пырать. Командăна хавхалантарма пĕлнисĕр пуçне кăткăс лару-тăрура та çухалса каймалла мар. Ун пек чухне выляса ямăн

– Спортра яланах çĕнтерÿçĕ пулаймастăн çав. Парăнни те пулкалать. Çакăн пек самантсенче ушкăнри тантăшсене хăпартлантарма пĕлни пĕлтерĕшлĕ, – ăнлантарать хастарскер.

Ăмăртусене тăтăшах хутшăнаççĕ вĕсем. Шкулта çеç мар, районта та çитĕнĕвĕсемпе палăраççĕ. Пĕр тупăшу уйрăмах Дианăн асĕнче юлнă.

– Пĕлтĕр районти ăмăртура вылянă чухне пирĕн ушкăнра аслисем, тахçанах вылякансем, виççĕн çеçчĕ, ыттисем – кĕçĕнреххисем, тин кăна вăйă вăрттăнлăхĕсене алла илекенскерсем. Çавăнпа вăй виçме кăткăсрах пулчĕ. Анчах та эпир пĕтĕм чунтан тăрăшрăмăр, 4-мĕш вырăна тухма пултартăмăр, – каласа парать çамрăк волейболист.

Кун хыççăн тăрăшуллă хĕрачасене, çав шутра Дианăна та, Тăвайри «Аль» физкультурăпа спорт комплексĕн директорĕ районти пĕрлештернĕ волейбол ушкăнне илнĕ. Халĕ Диана тренировкăсене çÿрет, ăсталăхне туптать.

Пиллĕкмĕш класранах волейболпа кăсăкланаканскер ахальтен çак спорт тĕсне суйласа илмен-мĕн. Унăн юратнă ашшĕне амăшĕ те – ăста волейболистсем. Ăмăртусене те хутшăнаççĕ. Вĕсем хĕрачашăн тĕслĕх вырăнĕнчех.

Кашни çын пĕр-пĕр ĕмĕтпе çунатланать. Дианăн та ун йышши тĕллев пур – вăл парашютпа сиксе курасшăн. Çакна çывăх вăхăтрах пурнăçласшăн. Экстремаллă спорт тĕсĕ мĕнпе илĕртет-ха черченскере? Парашютпа сиксе вăл хăйĕнчи таçта пытанса ларакан шикленĕве çĕнтерес тĕллевлĕ иккен. «Хăюлăх çитеретĕпех шухăшласа хунине пурнăçа кĕртме!» – терĕ вăл çирĕппĕн.

***Нина ЦАРЫГИНА.***

Тăвай районĕ,
Тăрмăш шкулĕ.

# «Патриотизм çемьерен пуçланать» конкурс

**2016 çулхи ака уйăхĕн 12-мĕшĕнчен пуçласа юпа уйăхĕн 1-мĕшĕччен ЧР ачасемпе çамрăксен библиотеки ачасем, çамрăксем тата республикăри вулавăшсен библиотекарĕсем валли пултарулăх ĕçĕсен «Патриотизм çемьерен пуçланать» республика конкурсĕ ирттерет.**

Тĕллевĕ – çитĕнекен ăрура граждданлăх, Тăван çĕршывпа мăнаçланас туйăмĕсене вăйлатасси, çемье историне пĕлсе çĕршыв шăпишĕн яваплă пулнине асăрхаттарасси, ЧР библиотекисен ачасемпе çамрăксене гражданла-патриотла воспитани парассипе çыхăннă çĕнĕ меслетсене палăртасси.

«Патриотизм çемьерен пуçланать» конкурса 7 çултан пуçласа 30 çултисем таранах тата республикăри библиотекарьсен хутшăнма юрать.

Конкурс йĕркипе тата заявка формипе вулавăш сайтĕнче паллашăр.

Ĕçсене 2016 çулхи ака уйăхĕн 12-мĕшĕнчен пуçласа юпа уйăхĕн 1-мĕшĕччен çак адреспа йышăнаççĕ тата регистрацилеççĕ: **428027, г. Чебоксары, пр. И.Яковлева, д. 8а, читальный зал. «На конкурс «Патриотизм начинается с семьи»** тесе палăртмалла. Электрон адреспа та юрать: **kmc@chuvrdub.ru**

Конкурс пĕтĕмлетĕвĕпе ЧР ачасемпе çамрăксен библиотекин официаллă сайтĕнче 2016 çулхи юпа уйăхĕн 25-мĕшĕ хыççăн паллашма пулĕ.

Конкурса хутшăнакансем пурте электронлă майпа Сертификат тивĕçĕç. Çĕнтерÿçĕсене дипломпа тата парнепе чыслĕç.

Ыйтса пĕлмелли телефонсем: /8352/ 52-37-22, 54-02-82.

***Антонина РАСТОРГУЕВА,***
***ЧР ачасемпе çамрăксен библиотекин тĕп библиотекарĕ.***

# Чăваш халăх çыравçин пултарулăх тĕнчи



**Ака уйăхĕн пиллĕкмĕшĕнче Республикăри ачасемпе çамрăксен библиотекинче Чăваш халăх çыравçи Юхма Мишши 80 çул тултарнине халалланă литературăпа музыка касĕ иртрĕ.**

Михаил Николаевич Юхма – халăх çыравçи, паллă историк-ăсчах, халăх сăмахлăхне пуçтараканĕ, педагог тата вĕрентÿçĕ, куçаруçă. Вăл республикăри, Раççейри тата пĕтĕм тĕнчери тĕрлĕ премисен лауреачĕ; пăлхар-чăваш проза, поэзи, драматурги, очерксемпе публицистикăн, пăлхар-чăваш халăхĕн авалхи тата вăтам ĕмĕрсенчи историне халалланă тĕпчев ĕçĕсен икçĕр ытла кĕнеки авторĕ. Михаил Николаевичăн произведенийĕсене тĕнчери çĕр ытла чĕлхене куçарнă; Азири, Европăри тата Африкăри вун-вун çĕршыв учебникĕсене кĕртнĕ. Тĕнчери чылай çĕршыври театр сцени çинче унăн вăтăра яхăн пьесине лартнă, вĕсен шутĕнче – «Улăм арçын ача», «Улăп-чуста». Унăн хайлавĕсем тăрăх нумай театрта оперăпа балет лартнă. Юхма Мишши сăввисемпе кĕвĕленĕ юрă чылай, вĕсенчен пĕрне 37-мĕш шкулта вĕренекен 3-мĕш класс ачисем итлерĕç, халăх писателĕ çинчен хатĕрленĕ видеоролик пăхрĕç.

Юбиляр çинчен Любовь Алексеевна Петрова каласа пачĕ. Литература касĕн хăни Михаил Николаевичăн пысăк çынлăхне мухтарĕ, унăн пултарулăхне çемйипе тăванĕсем мĕн тери пысăк витĕм кÿнине каласа пачĕ. Пуринчен ытларах пулас çыравçа асламăшĕ, Ăста Настук паллă халапçă тата сиплевçĕ, хавхалантарнă. Пĕчĕк Миша халăхра çÿрекен халапсене çав тери килĕштерни каярах çакна «Элпи чечекĕсем» кĕнекере çырса кăтартнă.

Михаил Николаевич чăваш халăх историйĕпе мĕнле кăсăкланма пуçлани ачасемшĕн уйрăмах интереслĕ пулчĕ, мĕншĕн тесен çакă ăна паллă историк-ăсчах пулма, нумай кĕнеке /çав шутрах «Авалхи чăвашсем» тата «Авалхи пăлхар-чăвашсем»/ çырса кăларма хĕтĕртнĕ-çке.

Ачасем валли Юхма Мишши вăтăр ытла кĕнеке кăларнă. Вĕсем: «Шуршăл ачи», «Вăрман кĕнеки», «Вăрман уявĕ», «Пÿрнескепе унăн тусĕсем» тата ыттисем. Вĕренекенсем Михаил Николаевича кĕтмен парнепе савăнтарас терĕç: «Юратнă çыравçă патне çырнă çыру» акцие хутшăнса хатĕрленĕ ĕçĕсене вуласа пачĕç. Мероприяти вĕçленнĕ май виççĕмĕш класс ачисем юбиляра çуралнă кунĕпе саламларĕç, ăна çирĕп сывлăх, пултарулăхра ăнăçусем сунчĕç.

***Татьяна ЗАХАРОВА,***
***ЧР ачасемпе çамрăксен библиотекин таврапĕлÿпе наци литературин пайĕн тĕп библиографĕ.***

**АВТОР сăнÿкерчĕкĕнче:** ачасем юратнă çыравçă валли çырусем хатĕрленĕ.

## ĂШĂ САЛАМСЕМ

СМС саламсене пĕлтермелли номер:
89051975911

Элĕк районĕнчи Мăн Карачура ялĕнче пурăнакан **Надежда Зиновьевна МЕДВЕДЕВА** ĕнер хăйĕн черетлĕ çуралнă кунне паллă турĕ. Эпир ăна çуралнă кун ячĕпе чĕререн саламлатпăр. Ĕçре ялан ăнăçу, пурнăçра тулли телей, çирĕп сывлăх тата обществăлла ĕçе хастар хутшăнма сунатпăр. Вăл ялан концертсене хутшăнать, илемлĕ юрласа савăнтарать.

***Пĕрле ĕçлекенсем.***

✦ ✦ ✦

Канаш районĕнчи Ешкилт ялĕнче пурăнакан питĕ пултаруллă **Владимир Трофимович ИГНАТЬЕВ** паян хăйĕн çавра çулне паллă тăвать. Мăшăрĕпе Антонина Яковлевнăпа виçĕ ача çуратса ÿстернĕ. Владимир Трофимовича чĕререн саламласа хурçă пек çирĕп сывлăх, иксĕлми телей, пурнăçра ялан çавăн пек вăр-вар пулма, пурне те ырă тĕслĕх кăтартма сунатпăр.

***Надежда ИЛЛАРИОНОВА тата Нина МИХАЙЛОВА.***

# Тарсăр çăкăр та пиçмест



**Йĕкĕреш шăллĕсемшĕн чунтан-чĕререн тунсăхлать Софья. Урокра та тепĕр чухне куçĕ умне тухаççĕ пĕчĕкскерсем...**

Авă, сăпайлă та лăпкă Павлик йăл кулса пăхать ун çине. Аллинчи теттине савăннипе лутăркарĕ, хĕвел пек çиçсе урисемпе тапăртатрĕ. Лара-тăра пĕлмен Илюш çав вăхăтра вĕсенчен пытанма та ĕлкĕрчĕ. Эх, тытăнчĕç ăна Павликпа шырама! Ăçта кăна пăхмарĕç пулĕ, ниçта та тупаймарĕç пĕчĕкскере. Канма тесе ларчĕç çеç, кантăк карри силленине асăрхарĕç. Ав, ăçта пытаннă иккен хайхискер! Кĕçех амăшĕ вĕсене апатланма йыхравларĕ. Вăл сĕтел çине турилккепе ăшаланă çĕрулми лартса пачĕ. Çырла варенийĕ те, килте пĕçернĕ çăкăр та – тем те пур сĕтел çинче. Курăк ярса вĕретнĕ тутлă чей те пăсланать. Пÿлĕмре ăшаланă çĕрулми шăрши сарăлчĕ...

Урок тухнине систерсе шăнкăрав янăранăран чăл-пар саланчĕç хĕрачан шухăшĕсем. Парта çинчи тетрачĕпе кĕнекине чиксе юлташĕсем хыççăн класран тухрĕ.

Софья Илюхина пиллĕкмĕш класра вĕренет. Пур предметпа та «5» паллăпа çеç ĕлкĕрсе пыраканскер çав тери хитре юрлать. Уяв-концерт та унсăр иртмест тата!

– Çуллахи каникула питĕ кĕтетĕп. Ун чухне шăллăмсемпе нумайрах вăхăт иртterĕп. Пушă чухне вĕсемпе выляса киленĕп, – ăшшăн кулса калаçрĕ хĕр пĕрчи.

«Пиллĕкмĕш класра вĕренекенскер çав тери ĕçлĕ-им? Ара, «пушă чухне шăллăмсемпе пулăп» тенине епле ăнланмалла?» – тейĕ хăшĕ-пĕри. Хуравĕ ансат. Софья кашни çулах аслисемпе вăрмана каскать. Çырла-кăмпа пуçтарса хĕлле валли компот-варени тунисĕр пуçне – сутлăхлăх та чылай татнă вăрман кучченеçне.

– Вĕсене сутма Улатăра çÿретпĕр. Эпир илсе килнĕ çимĕçе хапăлласах туянать хула халăхĕ. Хам ĕçлесе илнĕ укçапа шкула кайма çи-пуç туянни калама çук хăпартлантарать. Унсăр пуçне тăван кил валли сĕтел-пукан тата ытти япала та илтĕмĕр. Шăрăх çанталăкра, çеçкесем шанса, типсе ÿкме пуçласан та сулхăнта канса ларас çуках эпир. Ара, килте ларнипе çеç кĕсьене укçа кĕрсе выртманнине пĕчĕкренпех тĕшмĕртетĕп. Эпĕ те вăрмана çÿрени аннене тем пысăкăш пулăшу-çке. Юратнă çыннăма ялан савăнтарас килет. Унăн сăн-питĕнче ялан йăл-кулă çиçтĕрччĕ. Эпир ăна шăллăмсемпе çав тери юратса хисеплетпĕр, – тет хавас кăмăллă Софья.

***Элиза ВАЛАНС.***

Улатăр районĕ,
Кивĕ Эйпеç.

# Савӑнӑҫлӑ уяв




Пирӗн техникумра интереслӗ мероприятисем тӑтӑшах иртеҫҫӗ. Акӑ нумай пулмасть студентсен 1-мӗш общежитийӗнче Валентина Ильинична Егорова воспитатель пуҫарнипе «Сладкая парочка» пӗчӗк спектакль лартрӑмӑр.

Виктория Краснова, Сергей Филиппов, Анастасия Алексеева, Дмитрий Павлов, Диана Можайкина, Алена Петрова, Владислав Александров рольсене чӑн-чӑн артистсем пекех чуна тыткӑнламалла калӑпларӗҫ.

Уяв касӗнче юрату ҫинчен сӑвӑсем те янӑрарӗҫ. Конкурссем те чылай пулчӗҫ. Вӗсенчен пӗри – «Чи лайӑх мӑшӑр». Каччӑсемпе пикесем тӗрлӗ ыйтӑва хуравласа хӑйсен пултарулӑхне кӑтартрӗҫ. Унсӑр пуҫне сӑвӑ илемлӗ вуласа та, юрӑ шӑрантарса та тупӑшрӗҫ вӗсем.

Хаваслӑ кӑмӑлпа салантӑмӑр эпир. Уяв савӑнӑҫлӑ та кӑсӑклӑ иртни пире малашне те мероприятисене хутшӑнма хистӗ.

*Анастасия АЛЕКСЕЕВА,*
*Диана МОЖАЙКИНА,*
*Дмитрий ГУРЬЕВ*
*«Ҫамрӑк журналист» кружок членӗсем.*

# Редакцире — хӑнара

Нумай пулмасть эпир, Шупашкарти транспортпа строительство технологийӗсен техникумӗнче вӗренекенсем, «Тантӑш» хаҫат редакцийӗнче пӗчӗк экскурсире пултӑмӑр. «Ҫамрӑк журналист» кружокра ҫырас ӑсталӑха туптанӑ май кӑларӑм ӗҫченӗсене кӑсӑклансах итлерӗмӗр. Эпир те ку профессире ҫитӗнӳ тӑвасшӑн ӗмӗтленетпӗр-ҫке.

«Тантӑш» хаҫат редакторӗ Владимир Леонидович Федоров кӑмӑллӑн кӗтсе илчӗ. Журналист ӗҫӗ-хӗлӗ ҫинчен кӗскен те тӗплӗн каласа пачӗ.

– Чи малтанах корреспондентӑн ҫынна тимлӗн итлеме, шухӑша илемлӗн те тӗрӗс палӑртма, нумайӑшне астуса юлма пӗлмелле, – терӗ вӑл.

Калаҫу интереслӗ иртрӗ, нумай ҫӗннине пӗлтӗмӗр. Хаҫатӑн Интернетри социаллӑ тетелте ятарлӑ ушкӑн пурри те савӑнтарчӗ. Халӗ унта тӑтӑшах кӗрсе ҫӗнӗ хыпарсемпе паллашма май пур. Юратнӑ кӑларӑмӑн черетлӗ номерне мӗнле хатӗрленине те куртӑмӑр тӗлпулура.

Редакци ӗҫченӗсем кашнине «Тантӑш» парнелерӗҫ. Эпир те парӑмра юлмарӑмӑр – кружок членӗсем хатӗрлекен «Студентсен меридианӗ» хаҫата парса хӑвартӑмӑр.

*Виктория КРАСНОВА,*
*Алена ПЕТРОВА.*

# Пӗрин ӑнтӑлӑвӗ ыттисене те хавхалантарать




Кашни уява эпир тӗрлӗрен хатӗрленетпӗр, ҫӗннине шухӑшласа тупма тӑрӑшатпӑр. Акӑ, сӑмахран, Тӑван ҫӗршыв хӳтӗлевҫин кунне, мартӑн 8-мӗшӗ ячӗпе интереслӗ те хӑйне евӗр стена хаҫачӗсем кӑлартӑмӑр. Унта уяв саламӗсемсӗр пуҫне тӗрлӗ рубрика та пур. Ҫавӑн пекех «кӑларӑма» илемлӗ сӑвӑсемпе, ӳкерчӗксемпе пуянлатрӑмӑр.

Студентсен 1-мӗш общежитийӗн редколлегийӗнчи Анастасия Алексеева, Виктория Краснова, Алена Петрова тата Диана Можайкина хаҫатсене кӑсӑклӑрах тӑвас тесе чунтан ӑнтӑлаҫҫӗ. Ку вара ыттисене те пултарулӑх ӗҫне хутшӑнма хавхалантарать.

*Анастасия АЛЕКСЕЕВА,*
*Диана МОЖАЙКИНА.*

Шупашкарти транспортпа строительство технологийӗсен техникумӗ.

## ПӖР ШКУЛТАН ХЫПАРЛАҪҪӖ

### Телейлӗ ачалӑх

Пӗчӗк чухне мана хӗлле тӑтӑшах аслисем ҫунашкапа ярӑнтаратчӗҫ. Эпир пиччепе анкарти хыҫӗнче выляма кӑмӑллаттӑмӑрччӗ. Пирӗнпе ытти ача та пыратчӗҫ унта. Касӗнчех тӑвайккинчен хаваслӑн ярӑнаттӑмӑр.

Киле ҫитсен тутлӑ апат ҫиетпӗр, вӗри чей ӗҫетпӗр. Ун хыҫҫӑн Алеша пичче урокӗсене хатӗрлет, эпӗ вара теттепе вылятӑп. Ачалӑх вӑхӑчӗ телейлӗ те савӑнӑҫлӑ!

*Даша АФАНАСЬЕВА.*



⊙ *Даша МИХАЙЛОВА*
(Йӗпреҫ районӗ, Ҫӑкалӑх) *ӳкерчӗкӗ.*

### Хӑюллӑ автан

Кӳршӗсен автан пурччӗ. Эпир ӑна «хӑюллӑ» автан теттӗмӗрччӗ.

Пӗррехинче кӗркунне шкула каймa тухрӑм, пахча ҫумӗпе пынӑ чухне хыҫалалла ҫаврӑнса пӑхма шут тытрӑм. Ҫав хӑюллӑ кайӑк кӗтмен ҫӗртен тасҫтан чупса тухса сӑхса та илчӗ мана. Ай, епле ыраттарчӗ! Ӑна айккинелле сирсе пӑрахрӑм та сукмакпа малалла чупрӑм.

Уроксем хыҫҫӑн киле ҫитсен аннене ирхи пулӑм пирки каласа патӑм – вӑл ӗненмерӗ мана. Тепӗр кун вара леш автан ҫывӑх ҫыннӑма та хур кӑтартнӑ, ӑна та тапӑннӑ иккен. Ҫак пуҫтахла ӗҫсем ҫинчен кайӑк хуҫине пӗлтертӗмӗр.

Тепӗр кун «хӑюллӑ» автан курӑнмарӗ – ӑна витене хупнӑ-мӗн. Тинех вара шкула лӑпкӑн утма пуҫларӑм.

*Аня ИВАНОВА.*

Етӗрне районӗ,
Кивӗ Тинкеш шкулӗ.

## ЫРӐ ТӖСЛӖХ

# Ача садӗнчи тӗлпулура



Ҫак кун Шупашкарти «Колобок» ача садӗнчи аслӑ ушкӑншӑн питех те кӑсӑклӑ иртрӗ. Вӗсем патне хӑнана ҫӑлавҫӑ профессийӗпе тӗплӗн паллаштарас тӗллевпе МЧС ӗҫченӗсем килсе ҫитрӗҫ.

Тӗлпулу интереслӗ занятирен пуҫланчӗ. Ӑна Ксения Михайлова методист тата «Константин-01» пукане ертсе пычӗҫ. «Ачасем, пушарнӑйсене мӗнле номерсемпе шӑнкӑравласа чӗнмелле?» – тесе ыйтсан пӗчӗккисем пӗр-пӗрне пӳлепӳле кашниех пӗлекен «01» тата «112» цифрӑсене каларӗҫ. Ксения Михайлова пурне те мухтарӗ.

Кунта тӑрӑшакан воспитательсем ачасемпе тӑтӑшах хӑрушсӑрлӑх темипе калаҫусем ирттереҫҫӗ, пушартан мӗнле сыхланмаллине те ӑнлантараҫҫӗ. «Мӗн пӗчӗкренех инкек-синкекпе кӗрешмелли мелсене пӗлмелле. Хамӑра упраса хӑвармa вӗренмелле», – теҫҫӗ ача сачӗн ӗҫченӗсем.

Заняти хыҫҫӑн хӗрачасемпе арҫын ачасем тӗрлӗ конкурсра тупӑшса маттурлӑхне кӑтартрӗҫ. Пушарнӑйсен тумне кӗске вӑхӑтрах тӑхӑнса, хут ҫине ҫӑлавҫӑсен ӗҫ-хӗлне сӑнласа та тупӑшрӗҫ пӗчӗккисем. Ҫӗнтерӳҫӗсене «Константин-01» пукане парнесемпе савӑнтарчӗ.

«Смешарики» ятарлӑ мультфильм пӑхнӑ хыҫҫӑн пурте урама тухрӗҫ. Унта ачасем Шупашкарти Ленин районӗнчи 4-мӗш пушар чаҫӗн ӗҫченӗсемпе тӗл пулчӗҫ. Кунсӑр пуҫне ҫӑлавҫӑсен автоцистернине курма, унӑн тытӑмӗпе тӗплӗнрех паллашма та май пулчӗ. Пурте кӑсӑклансах сӑнарӗҫ пушар хуралҫисен техникине, паттӑрсем пирки юрӑсем те юларӗҫ, сӑвӑсем каларӗҫ.

*Нина ЦАРЫГИНА.*




# Ăруран ăрăва

Саша Петров халĕ 4-мĕш класра вĕренет. Икĕ çул каялла пĕрремĕш хут «Тантăш» хаçатпа тата «Тетте» журналпа туслашни унăн пурнăçне хăйне евĕр витĕм кӳнĕ. Аслашшĕ çырăнса панă кăларăмсене вуланă май хăй те хутпа ручка тытма пикеннĕ вăл. Çапла пĕррехинче мăн аслашшĕ пирки çырнă заметка хаçатра кун çути курсан арçын ачан хавхаланăвĕ татах та ӳснĕ.

Аслашшĕ, Владимир Васильевич Петров, вăрçă çинчен хайлавсем çырса «Астăвăм кĕнеки» кăларнă. Чăннипех те аслă, пултаруллă çын вăл. Пулас ăру валли паха тупра хатĕрлет – ял историне тĕпчет. Вăл ертсе пыракан музей, сăмахран, «Чи хăтлă музей» республика конкурсĕнче çĕнтернĕ. Музей çумĕнче йĕркеленĕ фольклор ушкăнĕ вара уявсенче юрă-ташăпа савăнтарса хавасланăх парнелет. Владимир Васильевичăн ĕçĕсем тăван халăхшăн питĕ пĕлтерĕшлĕ. Мăнукне те, авă, пĕлӳпе пултарулăх çулĕ çине тăратасшăн вăл. Иртнĕ пурнăç йывăрлăхĕсем çинчен каласа панă май паянхине хаклама вĕрентет. Ахальтен мар пулĕ Саша вăрçă çинчен вулама ытларах кăмăлланине палăртрĕ. Кĕнеке çырас ĕç питĕ йывăр пулнине ăнланать арçын ача, çапах хăйĕн те ĕмĕтĕнче çак пархатарлă шухăш тĕвĕленнĕ иккен.

Петровсен çемйине хастарлăхĕшĕн мухтаççĕ. Аслашшĕ çырса хатĕрленĕ «Шăпа» спектакльте Сашăпа йăмăкĕ Оля шкул ачисен сăнарĕсене калăплаççĕ. Çапла вĕсем пĕчĕккĕн театр ĕçне те хăнăхса пыраççĕ. Яла тĕрлĕрен делегаци килсен /сăмахран, республика тулашĕнчи чăвашсем/ вĕсене кĕтсе илнĕ çĕре Петровсен туслă çемйи те хутшăнать. Юрлаççĕ те вĕсем, ташлаççĕ те, хĕл кунĕсенче йĕлтĕрпе чупаççĕ. Аслисем кĕçĕннисене ырă йăлана хăнăхтарнинчен пахи мĕн пултăр ĕнтĕ?

– Биатлонист пуласчĕ. Çав спортсменсене тăтăшах сенкер экран çинче курса тĕлĕнетĕп. Ăнланатăп, ĕмĕте пурнăçлас тесен вăйлă пулмалла манăн, тĕл пеме пĕлмелле, çавăнпа спортпа та туслашрăм, – тет Саша пысăк çын пекех ăслăн. – Хаçатра вăрçă вăхăтĕнчи ачасен пурнăçĕ пирки ытларах вуласчĕ. Ачасене вара «Тантăшпа» туслă пулма сунатăп!

*Лариса ПЕТРОВА.*

Тăвай районĕ,
Енĕш Нăрваш шкулĕ.




# Пултарулăха туптасси – кашнин тĕрлĕрен

**Эх, юрлакан чĕре пек савăнăçли тата мĕн пур-ши? Ун пек чухне пурăнас, малалла талпăнас килет. Теприсен вара чĕре юрлать кăна мар, хăйсем те илемлĕ сасăпа çепĕç юрă шăрантарса çынсене савăнтараççĕ.**

Çавăн пек маттурсенчен пĕри – Тăвай районĕнчи Тăрмăш шкулĕнче 9-мĕш класра вĕренекен Екатерина Семенова. Катя иккĕмĕш класранпах концертсене хутшăнать. Пуçласа «Тăвай çăлтăрĕсем» конкурса «Кукушка» юрăпа хутшăнсан вăл иккĕмĕш вырăна тивĕçнĕ. Çавăнтанпа вара çулсеренех тĕрлĕрен ăмăртура палăрма тытăннă. Пĕлтĕр республикăра акăлчанла юрăсен конкурсне унпа пĕрле çĕр ытла ача хутшăннă. Унта Катя чи лайăх вунă юрăç шутне кĕнĕ.

Малтан Евгения Ниловна вĕрентекен хăнăхтарнă ăна юрă асамлăхне, халĕ вара хĕрачана пултарулăхне туптама пулăшаканĕ – Елена Николаевна. Юрлама юратакансен çемйинче ӳснĕренех унра çак талант вăраннă пулĕ. Асламăшĕ ялти фольклор ушкăнне çӳрет. Эх, мĕн тери паллă юрăç пулас килет-çке Катьăн!

– Кашни ача тĕрлĕрен. Пĕрисем хăйсен пултарулăх енне мĕн ачаранах пĕлеççĕ, ăна аталантараççĕ. Теприсене çакна тума вĕрентекенсем е аслă ăрури ытти çынсем пулăшаççĕ. Ашшĕ-амăшĕнчен те чылай килет, паллах, – тет хĕрача.

2013 тата 2015 çулсем уйрăмах савăнăçлă асаилӳсемпе çыхăннă. Çав çулсенче Катя «Тăвай çăлтăрĕсем» конкурсра Гран-при çĕнсе илнĕ. Асламăшĕ кашнинчех пысăк та тутлă торт пĕçерсе хавхалантарма та ӳркенмест. Сăмах май, хĕрача хăй те торт пĕçерме кăмăллать. Рецепчĕсене асламăшĕн кĕнекисенче те, Интернетра та тупать.

Анчах çав вăхăтрах ĕмĕтре тепĕр професси те пур унăн – стоматолог. Ку шухăш пĕлтĕрхи çулла тĕвĕленнĕ.

– Асаттепе асанне мана шăл тухтăрĕ пулĕ тенĕ иккен, анчах хама ку шухăша пĕлтермен. Юрать-ха, атте каларĕ. Интернетра стоматолог ĕçне çутатса паракан видеороликсем, кинофильмсем, презентацисем пăхрăм та чун мĕн ыйтнине ăнлантăм, – вăрттăнлăха уçрĕ Катя. – Шăлсем сывă пулччăр тесен вĕсене пăхсах тăмалла, кашни çулах тухтăр патне çитсе тĕрĕсленмелле. Вара чир вăраха каймĕ.

Вĕренӳре «5» паллăпа ĕлкĕрсе пыракан, предмет олимпиадисенче мала тухакан, пур çĕре те ĕлкĕрме тăрăшакан Катя хăй ĕмĕтленнĕ çĕре вĕренме кĕрĕ те чаплă специалист пулса тăрĕ, иккĕленместпĕр. Юрă вара яланах ăна хавхалантарса пырĕ.

*Лариса ПЕТРОВА.*

# Тӳшекӳ пултăр çиттиллĕ, çитти пултăр шăрçаллă...



«Питĕ ырă кăмăллăскер. Нумай вулать. Йăлтах пĕлет. Çавăнпа пурне те пулăшма тăрăшать», – тет тус-юлташĕ Томскра çуралнă Кристина Дурновцева пирки.

Ĕнтĕ хастар хĕрача çав хула пирки ытлашши те аса илмест. Унтан куçса килнишĕн пăшăрханмасть те, кулянмасть те.

– Маншăн Тăван çĕршыв – Чăваш Ен. Чăваш вăрманĕсемпе ĕшнисем, çырми-çатрисем, улăхсемпе çарансем паян та кăмăла çĕклеççĕ. Е тата, таçталла чупакан шурă пĕлĕтсене сăнанă самантра юратнă поэтсен сăввисене пăхмасăр калани чуна чăнласах хăпартлантарать. Пĕрремĕш класранпах Вăрмар районĕнчи Аслă Чак шкулĕнче вĕренетĕп. Пурте килĕшет: пĕлӳ çурчĕ те, вĕрентекенĕсемпе вĕренекенĕсем те. Хастар педагогсен ăсталăхне пула олимпиада-конкурссенче çĕнтеретпĕр. Шкул чыçне çӳлте тытатпăр, – тет Кристина.

Пурăна киле, пĕр класран тепĕр класа куçсан, вырăс классикĕсен сăввисемпе кăсăкланма пуçланă вăл. Библиотекăна çӳресе вĕсен пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ пирки вуласа пĕлнĕ, тĕпченĕ. Ахальтен мар-çке унăн чи юратнă предмечĕ – вырăс чĕлхипе литератури. Çавăнпа Валентина Александровна Никифорова урокĕсене чăтăмсăррăн кĕтет.

– Маншăн педагогăн кашни сăмахĕ – ылтăн пĕрчи. Валентина Александровна мĕн тери аслă учитель-çке! Пĕр иккĕленмесĕрех калатăп, эпĕ те унăн çулне суйлатăп. Алла аттестат илсен урăх ниçта та мар, Шупашкарти Иван Яковлевич Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университетне çул тытатăп. Пысăк çын пулатăпах. Петрарка калашле: пĕр çын та аслă ятпа çуралмасть. Кайран çеç хăйĕн сумлă та чаплă ĕçĕсемпе ăна илме тивĕç пулать. Çавăнпа эпĕ Валентина Александровнăна сума сăватăп, ун пекех пархатарлă ĕçлеме вĕренетĕпех, – палăртрĕ хăй шухăшне хастар пике.

Сăмахне çилпе вĕçтермессе шанаççĕ ăна вĕрентекенсем. Ара, паян та вăл хăй умне лартнă тĕллеве пурнăçлатех. Олимпиадăсенче çĕнтерет, обществăлла ĕçсенче палăрать, уяв-концертра илемлĕ юррипе савăнтарать.

Сăвва илемлĕ вулассипе районта çеç мар, республикăра та палăрнă Кристина. Юрий Лермонтова халалласа иртнĕ ăмăртура та авă пĕрремĕш вырăна тухнă.

– Кристина, эсĕ ырă кăмăллă пике. Сан пĕтĕм малашлăху малта. Пуласлăхра ыррине çеç сунатпăр. Тӳшекӳ пултăр çиттиллĕ, çитти пултăр шăрçаллă... Çапла каланă ватăсем ĕлĕкренех. Эпир те çак сăмахсемпе сана чунтан-вартан телей сунатпăр, – теççĕ ăна педагогсем.

*Элиза ВАЛАНС.*

Вăрмар районĕ,
Аслă Чак.



© Ксюша КОШЕЛЕВА (Йĕпреç районĕ, Çăкалăх) ўкерчĕкĕ.

# Хĕвел çаврăнăш

Клавдия ВИШНЕВСКАЯ

(Юмах)

Айван та пĕчĕк, вăйсăр çерçи чĕппи çӳлтен персе анать те ăна çийĕнчех кушак тытасшăн пулать. Çав вăхăтра вĕсенчен инçе мар шăши чупса иртет. Вăл хăйĕн тăшманне курсанах шăтăка чăмма хатĕр пулать, анчах салакайăк сасси унăн чунне ыраттарса ярать. Вăл çерçи патне пулăшма васкать. Ăна хӳринчен туртса çĕр шăтăкне чăмать. Çапла вара вĕсем унтанпа иккĕн пурăнма пуçлаççĕ: çерçи тата шăши. Вĕсем иккĕшĕ те çамрăк, хитре тата иккĕшĕ те питĕ ăшă чунлă та ĕçчен.

Çерçи шăши патĕнче пурăнма пуçласанах пĕр кун та ĕççĕр лармасть. Шăши килĕнче вăл яланах пуçтарать, тирпейлет, апат пĕçерет, шăшие ĕçрен кĕтсе илет. Лешĕ вара кунсерен çимелли пухма уя çӳрет.

Пĕррехинче шăши килне хĕвел çаврăнăш илсе таврăнать. Çерçи ăна курсан савăнсах каять, анчах шăши ăна шĕкĕлчеме памасть: çерçи çав тери çиесшĕн пулнине те пăхмасть. Пĕчĕк йăвара аран-аран кĕрсе тухмалăх шăтăкран çӳрекен шăши çерçие те çаплах çӳреме вĕрентет. Хĕвел çаврăнăш курнă çамрăк çерçи çĕр çине тухсанах çак çимĕçе шыраса аякках каять. Çӳлте вĕçсе пынă чухне салакайăксем пасарти пек кĕрленине асăрхать: вĕсем çапла савăнса хĕвел çаврăнăшне çинĕ иккен. Çамрăк çерçи те унта вĕçсе пырать, анчах çиме васкамасть, ăна шăши çиме хушмарĕ-çке. Апла пулсан кунта та çăвара пĕр пĕрчĕ ямасăр пуçтармалла. Çерçи, килте çакнă саппунне хывма маннăскер, çавăнтах хĕвел çаврăнăш пухрĕ те пухрĕ. Ыттисем ăмсанса пăхрĕç пулин те нумай çиет тесе вăрçмарĕç. Каç та пулать. Шăши тахçанах уйран таврăннă, анчах çерçи тусĕ çук та çук. Мăнтарăн шăшийĕ мĕн кăна шухăшламарĕ пулĕ çерçи çуккине кура: «Тен, яланлăхах вĕçсе кайрĕ-ши? Тен, килте ларса ывăнчĕ? Тен, тусан пуçтарасси килĕшмерĕ? Тен, кӳренчĕ?» Салакайăк çук та çук. Шăши те выртса сывăрма васкамарĕ. Вăл ырă тунине, çерçие вилĕмрен çăлнине ниепле те манма çук-çке.

– Манмĕ-ха, – лăплантарчĕ вăл хăйне.

Каçхи сасă ян кайнине такам та пĕлет. Çавăнпа та шăши нумай шухăшламарĕ, уя тухрĕ те:

– Çерçи тусăм! Ăçта эсĕ? Эпĕ сана питĕ-питĕ кĕтетĕп! – тесе çиле майăн та, хирĕç те кăшкăрчĕ.

Нумаях та вăхăт иртмерĕ, таçтан çинçе те вăйсăр сасă илтĕнсе кайрĕ.

Шăши савăннипе:

– Ур-ра-а! – тесе кăшкăрчĕ.

Çакна илтекен çерçи, ывăнса çитнĕскер пулин те, пухнă хĕвел çаврăнăш вăррисене пăрахса хăварма шухăшламарĕ, шăшие хирĕç пыма чĕнчĕ:

– Тусăм! Эпĕ кунта! Манăн çĕклем питĕ йывăр, эпĕ урăх утаймастăп та, вĕçейместĕп те. Кил кунталла…

Çĕрлехи уйăх çутинче сывăракан кайăксем çерçин аран тухакан сассине илтсен пурте вăранаççĕ те пулăшу пама васкаççĕ. Çĕрлехи тутă кайăксем пĕчĕк çерçи темĕн чухлĕ хĕвел çаврăнăш йăтнине курсан тĕлĕнсех каяççĕ.

– Чири-ик! Чири-ик! – терĕç пĕр-пĕрне тĕлĕннипе.

Епле маттур çерçи – тусĕ валли апат йăтать терĕç-ши, шăши тусне курсан, анчах пĕри те пĕр пĕрчине те тĕкĕнмерĕç. Кашни мĕн чухлĕ пултарать, çавăн чухлĕ çĕклесе пулăшрĕç. Вĕсем тиевне шăши йăвин шăтăкне сапса хăварчĕç те хăйсем çерçипе сывпуллашса çĕр каçма тĕттĕмлĕхе пытанчĕç. Çерçи тăкнă пĕрчĕсене пуçтарас тесе пĕшкĕнчĕ çеç, таçтан сулланакан шăши чупса çитрĕ те:

– Чи-чи-чи… Çумăр килет, – терĕ. Иккĕшĕ те васкасах хĕвел çаврăнăш пухрĕç, анчах ĕлкĕреймерĕç – çумăр витререн тăкнă пек чашлатса çуса ячĕ: мĕн пухни йăлтах йĕпенсе çилпе таçталла вĕçрĕ. Пĕр пĕрчĕ çеç юлнă иккен çерçи çăварĕнче. Шăшин тепĕр пĕрчĕ пулмалла.

– Çитет пире, тусăм, – терĕç иккĕшĕ те харăсах.

Çурхи çумăр часах чарăнчĕ. Çулла та пуçланнă темелле. Пахчасенче çынсем акаççĕ, лартаççĕ. Шăши унта тахçанах пулса курчĕ. Çерçи те курман мар. Хăйсем упранă икĕ вăрра та вĕсем пурăнакан вырăнтах акрĕç. Çуллахи хĕвеллĕ кунсем пур чуна та савăнтараççĕ. Кашни кунах çапла ырă çерçисем те вĕсем патне хăнана килнĕ тейĕн, пурте хавасланса юрласа çерçипе шăшие йăвинчен курăнасса кĕтеççĕ. Лешĕсем вара вĕсен сассипе савăнсах тухаççĕ. Кайăксем мĕншĕн çапла аван юрлани те вĕсене питĕ савăнтарать, анчах вĕсем нихçанхинчен те телейлĕ пек туйăнчĕç туссене. Йăвинчен тухсанах:

– Туссем, эсир мĕншĕн çав тери хаваслă? – тесе ыйтаççĕ шăшипе çерçи. Лешĕсем савăнсах çӳлтен аялалла вĕçсе хĕвел çаврăнăш çине пыра-пыра лараççĕ. Телейлĕ кайăксем татах та хаваслăрах пулнине кусем тӳрех ăнланмаççĕ, вĕсем те пĕрле савăнма пуçлаççĕ.

Кĕркунне те çывхарать. Çерçипе шăши хĕвел çаврăнăш нимине кайăк-тусĕсене чĕнеççĕ. Пиçсе çитнĕ çимĕç шăши йăвине кĕмест: пĕр пĕрчĕрен михĕ-михĕпе турттармалăх пулса çитнĕ хĕвел çаврăнăша çерçипе шăши армана турттарса каяççĕ.

Паянтан пуçласа шăшисем те, çерçисем те типĕ апат çимеççĕ тет. Вĕсен яланах – çуллă апат. Хĕвел çаврăнăш çăвĕпе хăйсен тусĕсене – пулăшакан кайăксене – хăналама та манмаççĕ имĕш. Тусĕсем те вĕсене пулăшсах тăраççĕ. Акă епле чаплă çурт лартрĕç кăçал çулла. Унта кам кăна пурăнмасть: пĕтĕм вĕçен кайăк тата вăрманти, уйри чĕрчунсем. Пурте пĕрле ĕçлеççĕ, пурте пĕрле хĕлле те шăнмаççĕ. Туслăх ăшăтать тесе калас килет. Ачасем, эсир те туслă пурăнăр. Юлташсем пĕр-пĕрин вăйĕпе çирĕпленсе пыраççĕ, йывăрлăха пĕрле çĕнтерсе усăмлатаççĕ. Пĕр-пĕрне пулăшакансем яланах телейлĕ.

Николай ТЕВЕТКЕЛ

## Çурхи сăнсем

Çурхи çил вĕрет
Ăшă кăнтăртан
Сар хĕвел кĕрет
Усă кантăкран.

Хĕвелпе вылять
Пĕчĕк Марине.
Тутинче кулать
Çутă çуркунне.

* * *

Сăрт хысĕнче, пĕр айлăмра
Хавасланса шавлать йăмра.
Юр çĕклемне пăрахнăран
Вăл савăнса шавлать паян.

* * *

Хĕвел хĕртет куллен,
Хуралчĕ тăвайкки.
Ӳпне выртать иккен
Сашукăн çунашки.

Тăрать вăл тунсăхпа
Тăвайккине пăхса.
Текех çунашкапа
Анаймăн ярăнса.

– Чи-чи! – тет кăсăйи
Хăвалăх хушшинче, –
Ачи-пăчи вăййи
Пулать çерем çинче.

Сашук, ан хуйхăр, – тет, –
Кĕçех çулла çитет.
Сана мĕнпур çĕрте
Хаваслă кун кĕтет.

* * *

Ан тив, кас-кас çил уртăр-и? –
Çурхи хĕвел хĕлех йĕрлет.
Юрпа хупланнă сурт тăрри
Хĕпĕртесе йĕрет.

Телейлĕ кун куççулĕ пек
Юхать тумла, çĕр чĕрĕлет.
Ĕçчен хресчен – çĕр улăпĕ
Çурхи куна ĕçе кӳлет.

## Апрель

Ашкăнать апрель ача пек: савăнса ташлать,
Çут çанталăка тем тĕслĕ тĕссемпе сăрлать.
Чĕркелерĕ кукăр-макăр хуп-хура йĕрсем:
«Ак сире пин-пин туратлă пысăк йывăçсем!»
Темĕн чухлĕ пăнчăсем те туратсем çине
Васкаса лартса тултарчĕ вăл çине-çинех:
«Кураксен пасарĕ, – терĕ, – пĕлĕр хăварах!
Юрă-кĕвĕ халь пит кирлĕ. Пулĕ савăкрах...»
Те вăл тытрĕ мандолина, те янра кĕсле?
Тумламсем пантăртатаççĕ таврара епле!
Пианино тăнкăртатнăн пĕчĕк шывсикки
Кĕрлесе юхать илемлĕн – пур-и ун пекки?
Ал ĕçне пĕлсен маттур эс! Пул ĕçчен, вăш-ваш!
«Шыв арманĕ эп тăвасшăн», – тет мана юлташ.
Ăсталарăм шыв арманĕ юлташпа пĕрле,
Çаврăнать вăл кăлтăр-кăлтăр шыв юххипеле.
Йăлăхтарчĕ шыв арманĕ. Тата мĕн тăвас?
Çенĕкре юлташăм темĕн каскалать хавас.
Йывăçран вăл ăсталарĕ пĕчĕкçĕ валак,
Турĕ мачтă, майлаштарчĕ парăсне те ак,
Мĕнешкел карап хăюллăн çул тытать шывра:
«Эх, ăçта ун капитанĕ?» «Тусăм, ан шыра!»
Капитанĕ – ман юлташăм. Тĕрлĕ çĕршыва
Шухăшлать çитсе курма вăл. Юрăсем хывать
Çĕнĕ ĕмĕтлĕ маршрутăн çул-йĕрне курса:
«Ун каяс çулне пӳлесшĕн, тăвăл, ан урсам!
Çул çӳретĕр çĕр тавра вăл. Вăл хăех Колумб!
Ĕмĕтне пĕрех татаймĕ тĕрлĕ каскăн хум.



© Лидия ПОНОМАРЕНКО ўкерчĕкĕ.

## Чее Эртиван

Ӳкерет Эртиван
сывлăшри çапăçу.
Ӳкерет вăл аван,
унашкал ăста çук.
Сăррине те чăнах
шеллемест вăл:
– Вай-вай!
Тĕтĕм-çĕрĕм кăна
Явăнать пек пĕрмай.
Калаçать кăмăлтан
Эртиван хăйпе хăй:
– Пĕтрĕ, – терĕ, – тăшман,
Пирĕнте – пысăк вăй.
Эп ыйтатăп:
– Ăçта
çĕтрĕ паттăр пилот?
Курăнмасть-çке кунта
халь нимле самолет?..
Чăпрĕ сăрă мĕлки
хулăн йĕр хăварса.
– Эс, пичче, кун пирки
шухăшла кăшт ларса:
Ак çинçе шурă йĕр
самолет хăварать.
Йĕр те кул, кул та йĕр –
хурçă кайăк тарать.
Вăл кунтан тахçанах
вĕçсе кайнă пулать.
Çакăн пек йĕр анчах
унăн хыççăн юлать…




# Сăмахкаçмăш



**Сылтăмалла:** 3. Суя çÿç. 6. Чăваш апачĕ. 9. Платникĕн ĕç хатĕрĕ. 10. Ăна кăмакаран туртса кăлараççĕ. 11. Шурлăх кайăкĕ. 12. Унта Робинзон Крузо пурăннă. 15. Йывăçсен ушкăнĕ. 16. ...-чашăк.

**Аялалла:** 1. Хÿрине пăрахса таракан чĕрчун. 2. Шыв ăсмалли савăт. 4. Каппайчăк. 5. Спидометр кăтартăвĕ. 7. Вăл ташлаттарать те, юрлаттарать те. 8. Наян. 13. Кĕлет. 14. Йытă çури.

## Нотăсем лартсассăн тĕрĕс, сăмахсем ретрен вуланĕç



**Çак тăваткалти ыйтусене тĕрĕс хуравласан диагональсем тăрăх тата икĕ сăмах вуланать.**

1. Узбекистанри хула. 2. Çывăх тăван. 3. Виçе аппаратури. 4. Вырăс композиторĕ. 5. Геометри терминĕ. 6. Чăваш спортсменĕ, çăмăл атлет. 7. Кăмака çумĕнчи «кăмака». 8. Каникул вăхăтĕнчи ятарлă ĕç.



---

**Çак тăваткалта ун айĕнчи ÿкерчĕксем вырнаçса тухнă. Эппин, вĕсене шыраса тупăр.**



| | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|
| Т | Ă | К | К | Р | Н | И |
| А | М | У | Н | Ы | В | К |
| Н | А | Р | А | Ж | О | Ы |
| А | К | Т | М | О | Р | Т |
| М | Р | К | Р | Ш | Й | Ё |
| А | Ă | Ă | А | Л | Е | К |
| Г | Т | Л | К | Я | А | М |



## Саспаллисĕм, саспалли, тĕрлĕрен-çке ун палли

| | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|
| 1 | К | Ă | Ш | М | А | Н |
| 2 | К | А | Ч | А | К | А |
| 3 | П | Ё | Р | Е | Н | Е |
| 4 | С | Ё | Р | Е | К | Е |
| 5 | П | У | С | Л | Ă | Х |
| 6 | Т | А | Н | Т | Ă | Ш |
| 7 | К | У | Ç | Л | Ă | Х |
| 8 | П | Ă | Л | Т | Ă | Р |
| 9 | В | Ă | Р | М | А | Н |
| 10 | Т | У | К | М | А | К |

**Çак тÿркĕтеслĕхри сăмахсем шăп та лăп хăйсен вырăнĕсенче чăмăртанса ларaççĕ. Анчах та эпир паракан ыйтусем вĕсен пĕлтерĕшĕсене пач урăхла çавăрса хураççĕ. Пĕртен-пĕр саспалли улăштарнипех.**

Камшăн вăл апат – кăшман,
Саншăн ютă çын – ...
* * *
– Ме-ке-кек, – тет качака, –
Умра выртать ...
* * *
Халĕ эпĕ пĕрене,
Тахçан пулнă...
* * *
Манăн ятăм – сĕреке,
Пулă тытсан ...
* * *
Хĕстерсе хурсассăн пуслăх,
Ялан çирĕп пулĕ...
* * *
Эсĕ маншăн çывăх тантăш,
Парнелем-ха чечек ...
* * *
Парăр кăна мана куçлăх,
Кăтартап сире кам ...
* * *
Шăтнă иккен çÿлтен пăлтăр,
Курăнать унтан сут ...
* * *
Ешерсе ларать вăрман,
Чĕрĕ-ха тымар – ...
* * *
Хăпарать, анать тукмак,
Пĕртен-пĕр выртать ...

*Николай КРАСНОВ* (Йĕпреç районĕ) *хатĕрленĕ.*